Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

78 (7718) № ✻ Юн кун, 2009 çулхи сентябрĕн (авăн) 30-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ыран – Пĕтĕм тĕнчери ватă çынсен кунĕ

## Çăмăллăхсем те, канлĕхпе лăпкăлăх та кирлĕ

***Кашни çын хăйне хисепленине, тимлĕх уйăрнине, чун ăшшине парнеленине хаклать. Ватă çынсем вара çакна уйрăмах хаклаççĕ.***

***Ватă çынсен уявĕ умĕн вĕсене паракан пулăшусем пирки каласа пама ЧР Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçине Н.П. ПЕТРОВАНА ыйтрăмăр:***

– ЧР Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕ социаллă пулăшу илме тивĕçлĕ ватăсене куллен пулăшса пырать.

Муркаш районĕнче паянхи кун 10094 пенсионер шутланса тăрать. Вĕсем хушшинче вăрçă участникĕсемпе инваличĕсем пурĕ128 çын, вăрçă çулĕсенче упăшкисене çухатнисем – 26, çав вăхăтра тылра ырми-канми тăрăшнисем те сахал мар – 2016-ăн. Ĕç ветеранĕсем районта – 4944 çын. Чăваш Республикин ĕç ветеранĕсене те уйрăм шута кĕртетпĕр – кунашкаллисем 28 çын.

Вĕсене паракан пулăшу тĕрлĕ енлĕн пулса пырать. Ытларах пĕччен пурăнакан пенсионерсене, йывăр лару-тăрăва лекнисене пулăшма палăртнă. Паянхи кун тĕлне районта 789 ватă çын пĕччен пурăнать. Вĕсенчен 120-шне килĕсенче пăхса тăракансем пур. Кăçалхи сакăр уйăхра ватă çынсем пулăшу пама ыйтса çырнисене тивĕçтерес тесех 22 ватăпа инвалида килĕсенче пăхса тăма палăртнă. 627-шне ытти енсемпе пулăшу панă.

Районта ватă çынсемпе инвалидсен вăхăтлăх пурăнмалли çурчĕ пур. Унта 14 çын хӳтлĕх тупнă.

2009 çулта Пенси фончĕ урлă адреслă социаллă пулăшăва 117 вăрçă участникĕ тивĕçрĕ. Вĕсене панă пулăшу 40950 тенкĕпе танлашрĕ.

**– Енчен те пĕччен пурăнакан ватă çыннăн пурăнмалли çурта юсамалла пулсан е, сăмахран, вăл пушара пула инкек тӳснĕ пулсан, вĕсем социаллă хӳтлĕх пайне пулăшу ыйтма пыма пултараççĕ-и?**

– Паллах, ватă çыннăн пурăнмалли çурт таврашĕнче юсав ĕçĕсем тумалли те тупăнать, е пĕр-пĕр инкекрен шар курасси те пулма пултарать. Хăшĕсен тата ватлăхра пĕрмай хаклă эмелсемпе сипленме тивет. Кунашкаллисене те май пур таран пулăшма тăрăшатпăр. Çакăн пек пĕччен пурăнакан ватă çыннăн пенси укçи пенсионерсен пурăнма палăртнă чи пĕчĕк виçинчен сахалрах пулсан Пенси фончĕ урлă килекен пулăшава илме май пур. Йывăр лару-тăрăва лекнĕ пенсионерсене пулăшас ыйтупа эпир Чăваш Республикин Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствине тухатпăр.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**

**Сăн ӳкерчĕкре: Юнкăра пурăнакан вăрçă ветеранĕ В.А. Васильева (сылтăмри) Беларуç патшалăх наградине тивĕçрĕ.**

Раççейре

## Аслă шкулсене вĕренме кĕмелли йĕрке улшăнать

РФ вĕрентӳ тата наука министрĕ Андрей Фурсенко 2010 çулта аслă шкулсене вĕренме кĕмелли йĕркене улшăнусем кĕртессине пĕлтернĕ.

Министр каланă тăрăх, улшăнусем пысăк пулмалла мар. Экзаменсем çине пăхасси çаплипех юлмалла. Вĕренме кĕриччен 8 уйăх маларах правилăсене улăштармассине палăртнă. Çавăнпа абитуриентсемпе ашшĕ-амăшĕсен ку енĕпе пăшăрханма кирлĕ мар.

Уйрăм предметсемпе аслă шкулсене кĕмелли балсен планкине пысăклатма шутлаççĕ. Хальхи пек виçĕ тапхăрпа мар, икĕ тапхăрпа вĕренме кĕмелле пулать. Кашни абитуриент 5 аслă шкула заявлени пама пултарать. Кăçал ку енĕпе чикĕ пулманни нумай йывăрлăх кăларса тăратрĕ.

Министр улшăнусене октябрь уйăхĕнче пичетлеме шантарнă.

Республикăра

## Ĕç укçи парăмĕ чакать

Тунти кун Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе тата федераци ведомствисен территорири органĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.

Чăваш Ен Раççейри тăватă регионтан малтисен шутĕнче Федерацин пурăнмалли çурт-йĕр строительствине аталантарма пулăшакан фончĕн проектне федераци харпăрлăхĕнчи кирлĕ пек усă курман е пачах та усăсăр выртакан çĕр лаптăкĕсене рынокра сутас енĕпе хутшăнать. 2009 çулхи авăнăн 25-мĕшĕнче аукцион пулнă. Унта Шупашкар хулинче 6,31 гектар лаптăк çĕре комплексăлă строительство валли арендăна илме килĕшӳ тумалли правăна сĕннĕ. Чăваш Енри тăватă представительтен пĕри – «Тус» акционерсен хупă обществи – çĕнтернĕ. Çак ĕрнере мĕн пур документа хатĕрлесе çитереççĕ, ун хыççăн компани çĕр лаптăкĕпе усă курмашкăн пикенĕ. Унта, малтанлăха хакланă тăрăх, 100000 тăваткал метра çити пурăнмалли хваттер туса лартма пултараççĕ. Пурăнмалли çурт-йĕр строительствине аталантарма пулăшакан фонд проекта пурнăçлама май парать.

Промышленноç предприятийĕсен ĕçченĕсене ĕç укçи тӳлес енĕпе парăм чакать. Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – промышленноçпа энергетика министрĕ Юрий Волошин пĕлтернĕ тăрăх, авăнăн 21-мĕшĕ тĕлне парăм 71,5 млн тенкĕ пулнă, тепĕр ĕрнерен вăл 48,32 млн тенке çити чакнă. Республика ертӳçисем предприятисемпе пĕрле çак ыйтăва ăнăçлă татса пама кирлĕ мерăсем йышăнаççĕ. Парăмсене татмалли график хатĕрленĕ, ăна пурнăçланине çирĕп тĕрĕслесе тăраççĕ.

Канашлура çавăн пекех агропромышленноç комплексне аталантарас, халăх сывлăхне сыхлас ыйтусене пăхса тухнă, çивĕч ытти темăна хускатнă.

Пенси фончĕ пĕлтерет

## Амăш капиталĕпе усă кураççĕ

Чăваш Республикинче 2007 çултанпа амăш капиталĕн сертификатне15 пин çын ытла илнĕ. Капиталăн калăпăшĕ кашни çулах индексациленет. Халĕ вăл 312 пин те 162 тенкĕ те 50 пуспа танлашать.

Пирĕн районта 2007 çултанпа 518 сертификат панă. Амăш капиталĕн шучĕпе аслă ачине техникумра вĕрентнĕшĕн тӳлемелли тăкаксене саплаштарма ыйтса пĕр заявлени çырнă.

## Заявлени çырман пулсан

Паянхи кун тĕлне хăйсен пенси накопленийĕсене вырнаçтарма пĕр-пĕр фонда заявлени çырман çынсен накопленийĕсем автомат мелĕпе «Внешэкономбанк» патшалăх ертсе пыракан компанине лекеççĕ. 2009 çулхи июлĕн 18-мĕшĕнчи 182 № федераллă саккунпа килĕшӳллĕн çак компани граждансен пенси накопленийĕсене икĕ инвестици портфельне хывма пултарать. Патшалăхăн хаклă хучĕсен малтанхи инвестици портфельне (кунта Раççей Федерацийĕн облигацийĕсем тата патшалăх гарантилекен хаклă хутсем кăларакансен корпоративлă облигацисем кĕреççĕ) тата анлăлатнă инвестици портфельне (облигацисемсĕр пуçне кредит организацийĕсенчи тенкĕпе ют çĕршыв укçисен депозичĕсем, ипотекăлла хаклă хутсемпе тĕнчери финанс организацийĕсен облигацийĕсем те кĕреççĕ).

Пенси накопленийĕсене «Внешэкономбанкра» упракансем сентябрĕн 30-мĕшĕччен маларах асăннă инвестици портфелĕсенчен пĕрне суйласси çинчен заявлени тăратман пулсан, вĕсен накопленийĕсем анлăлатнă инвестици портфельне куçаççĕ. Халĕ «Внешэкономбанка» уйрăм ертсе пыракан компанисенчен куçнă накопленисем патшалăхăн хаклă хучĕсен малтанхи инвестици портфелĕнче юлаççĕ. Патшалăхăн мар пенси фончĕсенчен куçнă накопленисене те «Внешэкономбанкăн» патшалăхăн хаклă хучĕсен малтанхи инвестици портфелне кĕртеççĕ.

Сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне Пенси фончĕн пирĕн районти уйрăмĕнче патшалăх ертсе пыракан компанине суйлас тесе пурĕ 17 заявлени йышăннă.

Çĕнĕлĕх

## Тупăш вăрттăнлăх пулмалла мар

Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 2009 çулхи авăн уйăхĕн 21-мĕшĕнчи 1065-мĕш номерлĕ Указĕпе «Федераллă патшалăх службине ĕçе вырнаçас текен граждансем тата федераллă патшалăх служащийĕсем тăратакан кăтартусен тĕрĕслĕхне пăхассин тата федераллă патшалăх служащийĕсем хăйсен служба йĕркине пăхăнассин Положенине» çирĕплетнĕ.

Асăннă Положенипе патшалăх службине ĕçе вырнаçас текен граждансем хăйсен тупăшĕ, пурлăхĕ, çывăх тăванĕсем пирки кăтартусем параççĕ. Халĕ вĕсен чăнлăхне тĕрĕслессин йĕркине те çирĕплетнĕ. Кунпа пĕрлех патшалăх служащийĕсем саккунпа пăхнă чарусене тата обязанноçсене пăхăннине епле пурнăçланине тĕрĕслессин йĕркине те пăхса хăварнă.

Тĕрĕслев çаксем тĕлĕшпе иртме пултарать: РФ Президент Администрацийĕн ертӳçи, РФ Президенчĕ çумĕнчи коррупципе кĕрешмелли Совет президиумĕн председателĕ, РФ Правительствин председателĕн заместителĕ тата РФ Правительство Аппарачĕн Ертӳçи, Совет президиумĕн членĕ, федераллă е территори патшалăх органĕн ертӳçи (е должноçри уполномоченнăй çын).

Тупăш, пурлăх тата пурлăх характерлă обязательствăсем çинчен калакан кăтартусене РФ Президенчĕн кадр ыйтăвĕсемпе тата патшалăх наградисем парассипе ĕçлекен Управлени тата РФ Правительство Аппарачĕн уполномоченнăй подразделенийĕ тĕрĕслет.

Тĕрĕслев вăхăчĕ 60 кун. Ăна 90 кунччен те тăсма пултараççĕ.

**В. ЗАХАРОВ,**
**район прокурорĕн аслă пулăшаканĕ.**

Старта чĕнетпĕр

## «Çĕнтерӳ ялавĕн» парнисемшĕн

Çуллахи спорт сезонне хупнă ятпа районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн кĕркуннехи çăмăл атлетика эстафети октябрĕн 3-мĕшĕнче Муркашри тĕп площадьре иртет. Ăмăрту 10 сехетре пуçланать.

Эстафетăна районти вăтам тата пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен пĕрлештернĕ командисем, учительсен командисем хутшăнаççĕ.

Командăсен составĕ:

СОШ – 6 яш, 6 хĕр тата 1 представитель;
ООШ – 3 яш, 3 хĕр тата 1 представитель;
Учительсен команди – 2 арçын, 2 хĕрарăм.

Хутăш эстафетăра пурин те 1 км чупмалла. 1991-1992 çулсенче çуралнисен шкулта вĕренни çинчен ĕнентерекен справка пулмалла.

1-мĕш вырăн йышăннă командăсене диплом, «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатăн хаклă парнине параççĕ. 2–3-мĕш вырăн йышăннă командăсене те дипломсемпе хаклă парнесем кĕтеççĕ.

**Хамăр инф.**

Камăн сăвăм пысăкрах?

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ АВĂН УЙĂХĔН 29-МĔШĔ ТĔЛНЕ ПĔР ĔНЕ ПУÇНЕ МĔН ЧУХЛĔ СĔТ СУНИНЕ КĂТАРТНИ (килогрампа)**

**Колонкăсенче: 1. Кăçал сунă. 2. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан («–» - сахалрах).**

| | | |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 8,0 | 1,0 |
| «Восток» | 8,8 | 0,5 |
| «Герой» | 10,5 | -1,4 |
| Ильич яч. хис. | 10,8 | 0,4 |
| Ленин яч. хис. | 11,1 | 5,1 |
| «Оринино» | 11,8 | 1,1 |
| «Передовик» | 11,5 | 3,9 |
| «Свобода» | 10,4 | 0,0 |
| Суворов яч. хис. | 12,9 | 4,9 |
| «Ударник» | 11,8 | 0,0 |
| Чапаев яч. хис. | 7,2 | -0,2 |
| Чкалов яч. хис. | 10,2 | -1,0 |
| «Хлебороб» | 6,3 | 0,8 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **10,8** | **1,3** |

Район уй-хирĕсенче

## Ăнăçу савăнтарать

Районти пĕрлешӳллĕ тата хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче тирпейлĕ çанталăк тăнипе туллин усă курса уй-хир ĕçĕсене вĕçлерĕç темелле. Ĕç пĕтĕмлетĕвĕсем те савăнтармасăр тăмаççĕ.

Хуçалăхсем хăйсен харпăрлăхĕнчи тыр-пула пĕтĕмпех вырса пĕтернĕ. Вăтам тухăç районĕпе 24,9 центнерпа танлашать. Ку вăл пĕлтĕрхинчен 2,4 центнер нумайрах. Уйрăмах пысăк тухăçлисем: «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики (50 центнер), Чкалов яч. хис. (39,1), Ильич яч. хис. (35,2), «Ударник» (34,3), «Восток» (32,4), «Герой» (30,1) хуçалăхсем.

Кĕр кунĕсемпе усă курса хуçалăхсем 1506 гектар (99 процент) çĕр улми кăларса пуçтарса илчĕç. Кунти вăтам тухăç – 123,7 центнер.

Районти çĕр ĕçченĕсем кĕске вăхăтрах 6610 гектар (122 процент) кĕрхи культурăсем акса хăварчĕç.

**Хамăр инф.**

ÇЫРĂНТАРУ

**Хаклă вулакансем! Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2010 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма унччен хакпах çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 191 тенкĕ те 70 пус.**